26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ИЮЛЬ
9
ЭРНЕКУН
139(6376) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Йышлă та тухăçлă выльăх-чĕрлĕхшĕн

11 район плана пур йышши выльăхсем енĕпе те тултарнă

Йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн çине тăрса кĕрешнипе пирĕн республика иртнĕ çул Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура палла çитĕнӳсем турĕ, Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата Пĕтĕм Союзри иккĕмĕш премие илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çак аслă чыса Ленин орденлĕ Чăваш республикин çулте тытмалла. Колхозсен обществăлла выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕпе тухăçлăхне татах та ытларах ӳстерессишĕн, государство кăтартса панă плана 1943 çулта та ирттерсе тултарассишĕн çĕнĕ вăйпа хастарлăн кĕрешмелле. Хĕрлĕ Ялава хамăр алăра çирĕп тытмалла.

Фронта çĕртыва аш-какай, сĕт-çу, çăмарта ытлăн-çитлĕн парса тăрассишĕн çине тăрса ĕçлесе, Чăваш республикинчи колхозсем кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем турĕç. Нумай колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе пăхакансем çĕнĕ пултарулăхпа ĕçлеççĕ.

Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕне-выльăхсем ĕрчетмелли плана республикăн 11 районĕ, сысна ĕрчетмелли плана 21 районĕ, сурăхсемпе качакасем ĕрчетмелли плана, Первомайски районсăр пуçне, пур районсем те тултарчĕç. Элĕк, Вăрнар, Ишлей, Калинино, Красноармейски, Советски, Сĕнтĕр, Çĕрпӳ, Шупашкар, Шăхасан тата Етĕрне районĕсем—пурĕ 11 район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1943 çулхи плана пур йышши выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарнă. Пуринчен те лайăх тĕслĕхсем Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем кăтартаççĕ. Район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли çулталăкри плана июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕне-выльăхсем енĕпе—110,3 процент, сыснасем енĕпе—136,5 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе—113,4 процент тултарнă. Çавăн пекех Çĕрпӳ районĕ лашасем ĕрчетес енĕпе те çулталăкри плана 100,1 процент пурнăçланă.

Пĕтĕмĕшле илсен, июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана халĕ ĕне-выльăхсем енĕпе 96,9 процент, сыснасем енĕпе—115 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе 113,9 процент [illegible] ĕнесем енĕпе 96,9 процент [illegible].

Çакна государство планне пĕтĕмĕшле пурнăçламан-ха. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе хăшпĕр районсем кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Хăшпĕр колхозсем халĕ те питĕ начар ĕçлеççĕ. Уйрăм районсен руководителĕсем çакна асăрхамаççĕ. Япăх ĕçлекен колхозсене малта пыракан колхозсен лайăх ĕçĕпе витсе хăварма хăтланаççĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕ 1943 çулта та хамăр алăрах юлтăр тесен, Чăваш республикин 1943 çулхи обязательствăсене тултармалла, ирттерсе пурнăçламалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли кăçалхи плана районсем тăрăх çеç мар, кашни колхоз тăрăх пурнăçа кĕртмелле. Кашни колхозра выльăх-чĕрлĕхсем планпа пăхнă чухлĕ е планпа пăхнинчен ытларах пулмалла. Çавăн пек ĕнтĕ задача.

Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕр Вăрнар районĕнчи колхозсем çеç пурте выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана тултарнă. Анчах кунта та лашасен йышне ӳстерес плана 5 колхоз пурнăçламан. Ытти районсенче ку енĕпе пысăк çитменлĕхсем палăраççĕ. Акă Элĕк районне илер. Район пĕтĕмĕшпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур йышши выльăхсем енĕпе те тултарнă. Анчах 26 колхоз лаша йышне ӳстермелли плана тултарман. Çавăн пекех 25 колхозра ĕне выльăхсем, 9 колхозра сыснасем, 11 колхозра сурăхсем ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртмен. Çавăн пекех ытти районсенче те. Сĕнтĕр районĕнчи 101 колхозран выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана лашасем енĕпе 26 колхоз, ĕнесем енĕпе 30 колхоз, сыснасем енĕпе 25 колхоз, сурăхсем енĕпе 31 колхоз пурнăçламан.

Çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас ĕçре те вăйлăн ĕçлемелле. Контрактаци планне тултармалла. Фермăсене [illegible] тăран пулмалла комплектласа çитерессе те.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерессине те уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен кадрсене вырăнтан вырăна куçарма кирлĕ мар. [illegible]

Государствăна аш-какай памалли плана 9 районри колхозсем тултарнă

Государствăна аш-какай вăхăтра парса татас—фронта пысăк пулăшу пани пулать. Çакна малта пыракан колхозсем лайăх ăнланса тăраççĕ. Оборонăн Государственный Комитечĕн [illegible] июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне 9 районри колхозсем—Элĕк, Вăрнар, Калинино, Сĕнтĕрвăрри, Советски, Сĕнтĕр, Шупашкар, Шăхасан, Етĕрне районĕсенчи колхозсем государствăна аш-какай 1943 çулшăн парса татрĕç, государство умĕнчи обязательствине пĕтĕмпех тултарчĕç.

Çав вăхăтра Октябрьски, Куславкка тата ытти районсем план тултарас ĕçре каярах юлаççĕ. Вĕсем çулталăк планне çуррине те тултараймаççĕ.

Уйрăмăнах колхозниксене единоличниксене тата служащисене государствăна аш-какай памалли обязательствине пурнăçлас ĕçре [illegible] Тăвай, Пăрачкав, Канаш тата ытти районсенче колхозниксемпе, единоличниксем тата служащисем аш-какай памалли обязательствине 10 процентран та ытла тултарман.

Аш-какай памалли обязательствине вăхăтра тултарасси—колхозсемпе колхозниксен тата единоличниксен фронт умĕнчи чыслă тивĕçĕ. Çакна кашни ĕççыннин асра тытас пулать.

Силос хывас тĕлĕшпе комсомолецсем çамрăксем ирттерекен вунăкунлăх

Силос хывмалли плана тултарма пулăшас шутпа ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ июлĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 20-мĕшĕ çити республика колхозĕсенче силос хывас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен вунăкунлăхне ирттерме йышăннă.

[illegible] ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсем [illegible]

ВКП(б) Обкомĕ ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕн решенине ырланă. ВКП(б) райкомĕсене [illegible]

Ăмăрту результачĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр., телефонпа). Промкомбинат коллективĕ (управляющийĕ Кузнецов юлташ) социализмлă ăмăртура [illegible] продукци [illegible] июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

Халĕ промкомбинат колхозсене тырпул пуçтарас вăхăтра пулăшас [illegible] 100 стан урапа, [illegible] лапатка тата урапа [illegible] тытнă.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ÇĔРТМЕ ТĂВАС, СУМ СУМЛАС ТАТА УТĂ ÇУЛАССИПЕ СИЛОС ХЫВАС ĔÇСЕМ ИЮЛĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Çĕртме тунă	Техникăлла культурăсем сумланă	Утă çулнă	Силос хывнă
Улатăр	50,6	79,0	65,0	51,3
Элĕк	92,3	82,0	50,1	75,4
Вăрнар	116,8	100,0	65,7	48,1
Йĕпреç	82,3	31,8	59,6	18,9
Ишлей	96,1	73,4	77,1	75,8
Калинино	101,6	95,2	72,1	25,9
Канаш	99,3	50,6	61,0	44,4
Куславкка	95,0	100,0	54,1	30,7
Комсомольски	100,5	17,0	63,6	51,9
Красноармейски	106,0	34,4	34,7	44,6
Хĕрлĕ Чутай	97,2	100,0	75,4	21,4
Кувакино	42,1	49,4	52,2	2,1
Сĕнтĕрвăрри	92,4	97,2	32,3	87,4
Октябрьски	98,4	26,2	41,2	42,4
Первомайски	58,7	55,7	56,3	10,3
Пăрачкав	44,4	78,6	66,1	22,0
Советски	109,0	100,0	90,1	49,1
Сĕнтĕр	109,5	85,5	36,1	61,3
Вăрмар	99,2	80,8	81,4	37,1
Çĕрпӳ	99,3	100,0	29,3	46,8
Шупашкар	119,1	100,0	62,0	34,5
Чкаловски	76,9	45,5	100,0	38,4
Шăмăршă	64,5	46,0	38,4	52,6
Шăхасан	92,5	52,1	92,4	82,9
Çĕмĕрле	76,7	93,0	59,6	78,7
Етĕрне	114,4	93,3	56,9	57,0
Елчĕк	100,8	98,1	100,0	54,5
Тăвай	104,6	100,0	100,0	54,5
Шупашкар хули	103,7	—	10,0	10,0
ЧАССР тăрăх	90,2	73,9	57,9	49,6
Июлĕн 1-мĕшĕнче пулнă	80,8	64,0	29,1	41,7

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 6-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 6-мĕшĕнче Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пирĕн войскăсем çапла тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсене хирĕç хаяррăн çапăçнă. Тăшмана наступлени тума йышлă авиаци пулăшса пынă.

Орелпа Курск енче тăшманăн пур атакисене те сирсе янă, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Белгород енче тăшман, пысăк çухатусем тӳссе, уйрăм участоксенче кăштах малалла куçнă.

Туллимар даннăйсем тăрăх, пирĕн войскăсем Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пĕр кун хушшинче нимĕçсен 433 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 111 самолетне персе ӳкернĕ. 22 нимĕç летчикне тыткăна илнĕ.

☆ ☆ ☆

Орелпа Курск енче пĕр соединени боецĕсем иккĕмĕш кун ĕнтĕ тăшманăн танкĕсемпе пехотин татти-сыпписĕр атакисене сире-сире яраççĕ, хăйсен позицийĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Çав соединени йышăнса тăракан участокра нимĕçсем артиллерирен персе тăнă хыççăн çапăçăва 400 танк таран кĕртсе янă. Çапăçура пирĕн артиллеристсемпе пехотинецсем тата бронебойщиксем тăшманăн 110 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 3000 çити салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Орелпа Курск енчи ытти участоксенче нимĕçсем совет оборонин малти линине татса кĕме хăтланнисем пурте çавăн пекех ăнăçусăр пулнă.

Совет боецĕсемпе командирĕсем тăшманпа çапăçнă чух хăйсен çирĕп тӳсĕмлĕхĕпе паттăрлăхне кăтартаççĕ. Маклин лейтенант, противотанковăй пăшалпа персе, нимĕçсен 4 танкне çунтарса янă. Бронебойщик Лозовой сержант 2 танка пĕтерсе тăкнă, Гусев красноармеец, противотанковăй граната вăркăнтарса, тăшманăн йывăр танкне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Белгород енче нимĕçсем иртенех совет позицийĕсене атакăлама пуçланă. Пирĕн войскăсем тăшмана пур йышши хĕçпăшалсемпе те вăйлăн персе кĕтсе илнĕ, ăна хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Кăнтăрла иртсен тăшман, танксем нумай илсе пырса, тепĕр хут наступлени пуçласа янă. Çав çапăçура нимĕçсен 100 танкĕ ытла пĕтнĕ. Пĕр вырăнта, питех те пысăк çухатусем тӳссе, гитлеровецсем халăх пурăнакан 2 пункта йышăнса илнĕ. Тăшман атака хыççăн атака тунă пулин те пирĕннисем ăна малалла кайма паман. Фронтăн пĕр участокĕсенче те кăç пулса килнчченех хаяр çапăçусем пынă. Çав çапăçусенче тăшманăн танковăй чаçĕсемпе пехоти пысăк çухатусем тӳсеççĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче икĕ енĕн те разведка тăвакан ушкăнĕсем активлăн кĕрешнĕ. Пĕр участокра пирĕн разведка тăвакан отряд, пралук карнă участок урлă каçса, тăшман оборони ăшне вăркăнса кĕрсе кайнă. Штык вĕççĕн çапăçса, разведчиксем гитлеровецсен ушкăнне пĕтерсе тăкнă, темиçе фашиста тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра тăшман пехоти пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Тăшман отрядне пирĕннисем пулеметсемпе тата пăшалсемпе пенĕ. Гитлеровецсем нимĕн йĕрки-паллисĕр каялла чакнă.

* * *

Калинин фронтĕнче нимĕçсем пирĕн гвардеецсем июнь уйăхĕн вĕçĕнче тытса илнĕ высотăна каялла туртса илме хăтланнă. Ирхине ирех нимĕç пехоти танксем пулăшса пынипе атака пуçласа янă. Пирĕн пехота подразделенийĕсемпе гвардеец-минометчиксем тăшмана оборонăн малти хĕррине çитме паман, сапаласа янă. Анчах та нимĕçсем 30 минута хушши артиллери персе тăнă хыççăн каллех атака пуçласа янă. Тăшман салтакĕсен пĕр пайĕ высотăн кăнтăр-хĕвеланăç айккине хăпарса кайнă. Совет подразделенийĕсем контратака тунă та гитлеровецсене высота айккинчен каялла ывăтса янă. Çав çапăçура пирĕн боецсем гитлеровецсене пĕр рота ытла вĕлернĕ тата 5 танк пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем 170 гитлеровеца вĕлернĕ. Артиллери тата миномет подразделенийĕсем нимĕçсен 16 дзотне, 10 землянкине тата 5 наблюдательнăй пунктне ишсе антарнă. Пĕр участокра Бондарев капитан командир пулса тăракан подразделенири артиллеристсем, нимĕçсен чугунçул эшелонĕ çине персе, темиçе вагона çĕмĕрсе пăрахнă. Тепĕр участокра Алексашев сержантăн оруди расчечĕ тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă автотранспорчĕ çине пеме пуçланă та грузсем тиенĕ 10 автомашинăран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Могилев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен тĕреклетнĕ пунктне аркатса тăкнă. Партизансем пралук карнă икĕ участок урлă каçнă та, тĕреклетнĕ пункта вăркăнса кĕрсе кайса, 120 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр отрядри партизансем минăсем хурса, тăшманăн çар эшелонне сирпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз тата автомашинăсем тиенĕ 23 платформа çĕмĕрĕлнĕ. 60 гитлеровец вилнĕ е аманнă.

* * *

Июлĕн 5-мĕшĕнче Орел патĕнче тыткăна илнĕ нимĕç летчикĕ унтер-офицер Гайнц Гей тата радист обер-ефрейтор Гергардт Шрамм çапла каласа панă: «Совет Союзĕпе Германи фронтне эпир июлĕн 3-мĕшĕнче Югославирен çитрĕмĕр. Июлĕн 5-мĕшĕнче 2 сехет те 12 минутăра пирĕн эскадра вырăссен укреплениийĕсем çине бомбăсем пăрахма приказ илчĕ. Эпир бомбăсем пăрахма ĕлкĕрейменрĕмĕр те, пирĕн «Юнкерс—87» йышши бомбардировщика совет истребителĕсем хут тивертсе ячĕç. Калас пулать, эпир совет авиацийĕпе зенитнăй артиллери чăнах та вăйлăн хирĕç тăрасса кĕтнĕ. Анчах та вырăс летчикĕсем эпир шутланинчен нумай вăйлăрах çапăçрĕç, çакă пире тĕлĕнтерсех ячĕ».

ИЮЛĔН 7-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 7-мĕшĕнче ОРЕЛПА КУРСК тата БЕЛГОРОД енĕсенче пирĕн войскăсем противникпа вăйлăн çапăçнă, тăшман кунта танксемпе пехотăн пысăк вăйĕсемпе малалла наступлени тума хăтланнă. Нимĕçсене наступлени тума ытти фронтсенчен куçарса килнĕ нумай йышлă авиаци пулăшса тăнă. Кун каçипех сывлăшра хаяр çапăçусем пулнă.

Орелпа Курск енче противникăн атакисем пурте ăнăçсăр пулнă.

Белгород енче противник, пысăк çухатусем тӳссе, хăшпĕр таран малалла куçнă.

Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пирĕн войскăсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 520 çити танкне пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери пенипе противникăн 229 самолетне персе ӳкернĕ.

Тĕплĕн палăртнă тăрăх, июлĕн 6-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата пирĕн зенитнăй артиллери пенипе, малтан пĕлтернĕ пек, нимĕçсен 111 самолетне мар, 217 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Орелпа Курск енче пирĕн войскăсем наступлени тăвакан противникпа кун каçипех вăйлăн çапăçнă. Пĕр соединени участокĕнче тăшман танкĕсен ушкăнĕсем (кашни ушкăнра 80-ран пуçласа 100 машина таран пулнă) пирĕн тĕреклетнĕ участоксене пĕрмаях штурмланă, пирĕн фронта татса кĕме хăтланнă. Танксем хыççăн нимĕç мотопехотин пысăк вăйĕсем пынă. Пирĕн войскăсем противникăн пур атакисене те сирсе янă, хăйсен позицийĕсене çирĕппĕн тытса тăраççĕ. Уйрăм участоксенче нимĕç танкĕсен темиçе ушкăнĕ (кашни ушкăнĕнчех 15—30 машина пулнă) пирĕн чаçсем вырнаçнă участоксем урлă каçса шалалла кĕрсе кайма пултарнă. Кун вĕçленнĕ тĕле çав танксене пурне те пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен çĕмĕрнĕ тата пĕтерсе тăкнă танкĕсем хушшинче «Тигр» йышши танксем 40-рен те ытла шутланаççĕ.

Пирĕн авиаци сывлăшри хаяр çапăçусенче противник авиацине йывăр çухату тӳстернĕ.

Совет боецĕсемпе командирĕсем хастарлăхпа паттăрлăхăн тĕслĕхне кăтартаççĕ. Подполковник Оноприенко командир пулса тăракан подразделени тăшманăн йышлă войскисем урса кайсах тапăннине чарса тăнă. Нимĕç танкĕсемпе пехоти çав подразделение çавăрса илсен те боецсем хăйсен позицийĕсене пăрахса хăварман. Паян çав подразделенири боецсем тăшман хупăрласа илнĕ вырăнтан шăтарса тухнă та çийĕнчех нимĕçсене атакăланă. Хаяррăн çапăснă хыççăн подразделени противника каялла хăваласа янă, хăйĕн малтанхи позицийĕсенче вăйлăн çирĕпленсе ларнă.

* * *

Белгород енче ирхине пĕр сехет хушши артиллерирен персе тăнă хыççăн нимĕçсем çĕнĕрен наступлени пуçласа янă. Çапăçу питĕ хĕрӳллĕн пулса пынă. Халăх пурăнакан хăшпĕр пунктсем, лайăх вырăнсемпе высотасем темиçе хут та аларан алла куçнă. Кун каçиччен нимĕçсем хăйсен хавшаса çитнĕ дивизийĕсене пулăшма пĕрмаях подкрепленисем илсе пырса вĕсене атакăна кĕртекĕрте янă. Пĕр участокра каç пулнă тĕле противник кăштах малалла куçса темиçе яла йышăнса илнĕ. Пирĕн войскăсем контратака тума тытăннă, малтанхи позицисене каялла тавăрассишĕн кĕрешеççĕ.

* * *

Калинин фронтĕнчи пĕр участокра пирĕн подразделенисем противникăн темиçе атакине ăнăçлăн сирсе янă. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен 300 çити салтакĕпе офицерне, 13 пулеметне, 6 минометне пĕтерсе тăкнă тата противникăн 2 танкне çунтарса янă. Пирĕн боецсем 9 пулемет, 6 миномет тата 50 винтовка тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр чаçăн разведка тăвакан ушкăнĕ тăшманăн тĕреклетнĕ пунктне кĕтмен çĕртен атакăланă та нимĕç гарнизонне вĕлерсе пĕтернĕ. Çапăçу хирĕнче 60 гитлеровец вилсе юлнă. Тыткăна илнисем пур тата трофейăсем тытса илнĕ. Задачăна пурнăçа кĕртнĕ хыççăн разведчиксем хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерех пирĕн артиллерипе минометсенчен хирĕç-хирĕç персе тăнă. Пирĕн подразделенисем тăшман артиллерин тата миномечĕсен темиçе батарейине пусарса лартнă, противникăн 11 блиндажĕпе 3 дзотне аркатса тăкнă. Акишевпа Кичибеков кĕçĕн сержантсем наводчик пулса тăракан минометсен расчечĕсем тăшманăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă. Уйăх çурă хушшинче пĕр чаçри 37 снайпер нимĕçсен 472 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Снайпер Петр Беляков 101 гитлеровеца, Алексей Адров—66, снайпер Павел Хромов—65 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пинск облаçĕнчи пĕр районра кĕрешекен партизансен отрячĕ июнь уйăхĕн вĕçĕнче çĕрле нимĕçсен чугунçул станцине хуралне тапăннă. Штык вĕççĕн çапăçса партизансем вуншар гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсен ытти салтакĕсем тарса саланнă. Станцие тытса илсе, совет патриочĕсем унти кĕпере сирпĕнтерсе янă, стрелкăсене пурне те çĕмĕрсе тăкнă, чугунçул линине 1000 метр хушши аркатнă.

* * *

Юлашки вăхăтра гитлеровецсем совет оккупациленĕ районĕсенче интеллигентсемпе тĕп çыннисене нумай арестленĕ. Барановичи хулинче 3 ксендза тата учительсемпе инженерсене, врачсене 50 çынна арестленĕ. Слонимра тата ун таврашĕнчи ялсенче нимĕçсем 17 ксендза тата учительсемпе врачсене 100 çынна ытла тĕрмене хупса лартнă. Несвижски районра 35 интеллигента арестлесе концентрациллĕ лагерьсене янă. Нимĕçсен фашистла çынçиенĕсем тĕрмери çынсене хытă асаплантарнă, вĕсенчен чылайĕшне персе вĕлернĕ.

* * *

Италири Бриндизи ятлă хулара матроссем пăлханма тытăннă. Пĕр çар карапĕн команди боевой задание пурнăçламашкăн тинĕсе тухма килĕшмен. Çавăн пекех Специре те пăлханусем пулнă, унта Итали матросĕсем флотран нимĕç контролерĕсене хăваласа яма ыйтнă, çав матроссене офицерсен ушкăнĕ хута кĕнĕ. Итали çар влаçĕсем матроссемпе офицерсене нумайĕшне арестленĕ, тесе пĕлтереççĕ.

Тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленнине тĕрĕслетпĕр

Кам пырса пулăшасса кĕтеççĕ-ши?

ШĂХАСАН, июлĕн 6-мĕшĕ. (Телефонпа). Эпир Шĕкĕрти «Новый путь» колхозра пултăмăр.

— Уборкăна хатĕрленсе çитрĕр-и?—тесе ыйтрăмăр колхоз председателĕнчен, Иван Спиридоновран.

— Ятламаллах мар. Тепĕр икĕ эрнерен ыраш вырма тухатпăр,—тесе ответлерĕ Спиридонов юлташ.

Ялхуçалăх машинисем лараканă вырăна пытăмăр. Колхозăн икĕ жнейка пур. Вĕсем уçă çĕртех лараççĕ. Пĕрне те юсаман. Пĕр жнейкин чаçĕсем çитмеççĕ: шатун тата çыхăнтарса тăракан муфта çук. Машинăсене пĕлтĕр тырă вырнăранпа та тасатман. Жнейкăсен платформисем лупас айĕнче тислĕк çинче выртаççĕ.

— Ку тата мĕнле жнейка?—тесе ыйтрăмăр Спиридоновран.—Унпа ĕçлемен икĕ çул ĕнтĕ, унăн чаçĕсене те вăрласа пĕтернĕ,—терĕ Спиридонов юлташ. Машинăсене кунта хуçасăрла пăхаççĕ.

Итем çине кайрăмăр. Ултă лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилка пĕлтĕр аван çапнă вырăнтах ларать. Унăн чаçĕсем ăçта килнĕ унта сапаланса выртаççĕ.

Амбарсене тасатман. Урапасем çитмеççĕ. Тырпулсене пухса кĕртме 90 михĕ кирлĕ, халь мĕншурĕ те 13 михĕ çеç пур. Кĕреплеллĕ çавасене тума та тытăнман. Çурласене шăлламан. Столовăй уçма хатĕрленмен. Ача ясли уçма шутламаççĕ.

Колхоз ытти ĕçсенче те кая юлса пырать. Çĕртме тунă çĕрте 12 лаша çеç ĕçлет. Çавăнпа колхоз çĕртме тăвас плана июлĕн 15-мĕшĕ тĕлне çеç пурнăçлама шутлать.

Колхоз правленийĕ ĕçкунĕсен минимумне тултарман колхозниксем пирки нимĕнле мера та йышăнмасть. Июнĕн 15-мĕшĕ тĕлне миçе колхозник ĕçкунĕсен минимумне тултарманнине те пĕлмеççĕ.

Колхозниксем хушшинче агитациллĕ масса ĕçĕ питĕ начар пырать. Кăçалхи çуракри вăхăтĕнче те, ун хыççăн та стена хаçачĕн пĕр номерĕ те тухман.

Кунти комсомол организацийĕн ĕçĕсемпе ВЛКСМ райкомĕ интересленмест. ВЛКСМ райкомĕн работникĕсем унта кăçал пĕрре те пулман. Колхозри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕ те нимĕн те туман. Иртнĕ çулта колхозăн 45 центнер тыррине вăрласа пĕтернĕ. Кун çинчен ВКП(б) райкомĕ те, райсовет исполкомĕ те пĕлнĕ. Анчах паян кунччен çитсе те никама та ответ тыттарман.

В. ВЕСЕЛОВ.

„Сосновка" колхоз ыраш ăçта ăнать

ШĂХАСАН, июлĕн 5-мĕшĕ. (Хамăр корр). „Сосновка" колхозăн кăçал 80 гектара яхăн кĕрхи тырăсем акса хăвармалла. Ирхи çĕртмене халь мĕн пурĕ те 14 гектар çеç тунă. Çĕртме туман пулсан ăçта тата мĕнле акас теççĕ-ха кунта кĕрхи тырăсене? Çакăн пек йĕркесĕрлĕхпе райçĕрĕç пайĕ тата хăçанччен килĕшсе ларĕ?

„Ĕç вăйĕ çук", тет колхоз председателĕ В. Петров. Анчах чăн-и ку? Пачах тĕрĕс мар. Ĕçе йĕркелесе пыма ӳркенеççĕ, çавăнта кăлтăк. Руководительсен айăпĕпе колхозра ĕç дисциплини япăхса кайнă. Колхоз председателĕн примерĕпе кунта колхозниксем ĕçе ирхине 8—9 сехетре çеç тухаççĕ, сӳрĕк ĕçлеççĕ, ĕçрен ирех пăрахса кĕреççĕ. 6 колхозник ĕçкунĕсен пĕрремĕш срокри минимумне пурнăçламан. Анчах кахалсем ĕçлеме тăрăшакан колхозниксемпе танах хисепленеççĕ.

Утта капана хываççĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Кунти колхозсем утă тата клевер çулса пухас ĕçе июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх валли лайăх утă хатĕрлесси халĕ чи малти вырăнта. Вăйпитти колхозниксем пурте улăхра. Утă шуçтарнă çĕрте çамрăк ачасемпе хĕрачасем те маттур ĕçлеççĕ.

Уравăшри «Майăн 1-мĕшĕ» колхозăн кăçал 150 гектар утă çулса пухмалла. Енерхи куна 115 гектар çулнă. Çулнă утта типĕтсе çийĕнчех капансене хывса пыраççĕ. Клевер çулнă çĕрте Михаил Сергеев нормăна 260 процент, Варвара Цыганова 250 процент тултарса ĕçлеççĕ. Колхозница Анна Димитриева кунне 0,10 гектар çулас вырăнне 0,20 гектара çити çулать.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем те çитес ик-виçĕ кун хушшинче утă çулса пĕтереççĕ. Капан тунă çĕрте 68—70 çулхи старикĕсем питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхозник Бельковский юлташ утă капана хывнă çĕрте ĕç нормине 270 процент тултарать. Унтан та ватăрах Петров юлташ ĕç нормине куллен 200—250 процент тултарать.

Х. ЛИСИН.

Курск районĕнче нимĕҫсем наступлени туни тата Гитлер ставкинчи жуликсем

Нимĕҫ войскисем июлĕн 5-мĕшĕнче ирхине Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче пуҫласа янă вăйлă наступлени пĕтĕм пĕрремĕш кунĕнченех результатсем çинчен Гитлерăн ставки шарламасăр ирттерсе ячĕ. Июлĕн 6-мĕшĕнче 7-мĕшĕнче гитлерла командовани [illegible] Хĕрлĕ Çар наступлени [illegible]

Мĕншĕн-ха Гитлер ставкин çавăн пек [illegible]

Совет Информаци Бюровĕ: июлĕн 5-мĕшĕнче ирхине нимĕҫсем фашистла войскисем [illegible] Курск çине тата Белгород районĕнчен—çурçĕрелле, Курск çине пырса çапма тытăнчĕ.

[illegible] 2-мĕш, 9-мĕш, 12-мĕш, 18-мĕш, 20-мĕш тата 23-мĕш танковăй дивизисене, 36-мĕш моторизованнăй, 6-мĕш, 7-мĕш, 78-мĕш, 86-мĕш, 216-мĕш, 258-мĕш тата 383-мĕш пехотăй дивизисене [illegible] Белгород енче вĕсем 3-мĕш, 6-мĕш, 7-мĕш, 11-мĕш тата 19-мĕш танковăй дивизисене, çавăн пекех тата «Адольф Гитлер», «Великая Германия», «Райх» тата «Мертвая голова» ятлă СС-сен танковăй дивизийĕсене, 106-мĕш, 167-мĕш, 168-мĕш, 255-мĕш, 320-мĕш, 162-мĕш тата 332-мĕш пехотăй дивизисене [illegible]

Çапла вĕтĕ, нимĕҫсем енчен наступленине 15 танковăй дивизи, пĕр моторизованнăй тата 14 пехотăй дивизи хутшăннă.

[illegible] Белгород районне танксем нумай йышлăн куçарса килнĕ.

Çав мĕн пур даннăйсенчен, çавăн пекех тата тыткăна лекнĕ офицерсем, летчиксем, салтаксем кăтартнă паннинчен те çакă курăнса тăрать: кăçалхи июлĕн 5-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Гер- [illegible]

[illegible] лаҫа янă татăклă наступлени малтанхи виçĕ кун хушшинче ăнăçлă пулмарĕ. Çавăн пек ĕç ăнăçсăр пулнă пирки гитлерла командовани шăртланма тытăннă, çухалса кайнă, çавна ĕнтĕ вĕсем жуликла хăтланса витсе хăварма тăрăшаççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Тăшман атакисене сирсе ячĕç

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 6-мĕшĕ. **(ТАСС спецкорĕ).** Июлĕн 5-мĕшĕнче, тул çутăлса килнĕ чух, Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче наступлени тума тытăннă нимĕҫсен фашистла войскисемпе пирĕн войскăсем хушшинче вăйлă çапăçусем пуçланса кайрĕç. Гитлеровецсем çапăçăва танксем, пехота, артиллери тата авиаци чылай кĕртсе ячĕç. Наступлени пуçланиччен малтан артиллерипе хытă персе тăчĕç. Йывăр орудисемпе шултăра калибрлă минометсенчен вăйлăн персе тăрса, авиаци пысăк ушкăнĕсемпе умлăн-хыçлăн вĕçсе пырса тапăнса, нимĕҫсем пирĕн орудисемпе минометсене пусарса лартма тата çар чаçĕсен речĕсене аркатса яма шутланă.

Совет артиллерийĕ нимĕçсене хирĕç вăйлăн пеме тытăнчĕ. Батарейăсем харăслатса пенипе тăшманăн нумай орудине пусарса лартрĕç.

Сывлăшра вăйлă çапăçусем пулса иртрĕç. Тăшманăн авиацийĕ пысăк çухатусем тӳсрĕ.

Артиллерипе персе тата авиаципе тапăнса хатĕрленнĕ хыççăн тăшман пехотин ушкăнĕ пĕр пысăк мар участокра танксен хӳттипе наступлени пуçласа ячĕ. Гитлеровецсем, пирĕн чаçсене çак пĕчĕк участокпа илĕртсе тăрса, пысăкрах вăйпа урăх районтан тапăнса кĕме шутласа хунă. Хаяр çапăçу пуçланса кайрĕ. Пирĕн пĕр стрелковăй часть фашистсен малтанхи атакине каялла сирсе ячĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, иккĕмĕш атака пуçланчĕ. Ку тапхăрта тăшман çапăçăва 200 яхăн танк кĕртсе ячĕ. Танксен колонни умĕне нимĕçсен «Тигр» текен йывăр машинисем шуса пычĕç. Çак вăхăтрах пирĕн оборонăн малти хĕррине нимĕç авиацийĕ хаяррăн тапăна-тапăна илчĕ.

Нимĕç бомбардировщикĕсен речĕсем хушшине совет истребителĕсен йышлă ушкăнĕсем вăркăнса кĕрсе кайрĕç. Вĕсен танкĕсен çулне пирĕн артиллеристсем, пехотинецсем тата штурмовик летчиксем пӳлсе лартрĕç. Çапăçу пуçламĕшĕнчех тăшманăн темиçе танкне вут тивертсе ячĕç, вĕсем хушшинче виçĕ «Тигр» çунса кайрĕ.

Пирĕн войскăсем танксем хыççăн пыракан нимĕç пехотине флангсенчен пенипе, танксенчен уйăрса илчĕç. Кăнтăрла çитнĕ тĕле тăшманăн нумай машинисене пĕтерсе тăкрĕç. Тăшманăн пур атакисене те пысăк çухатусем тӳстерсе каялла сире-сире ячĕç. Уйрăм участоксенче кăна нимĕçсен пысăк мар отрячĕсем пирĕн оборонăна пăртакçă саваллатса кĕме пултарчĕç.

Чăваш АССР столици Шупашкар хулипе Мари АССР столици Йошкар-Ола хушшинчи социализмлă ăмăрту ДОГОВОРĔ

Отечественнăй асла вăрçă совет халăхĕнчен мĕнпур вăйсене хурса ĕçлеме, геройла Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшса тăрас тесе мĕнпур майсене мобилизацилеме ыйтать. Сталин юлташăн кăтартăвĕсене пурнăҫа кĕртсе пырса, Йошкар-Олапа Шупашкар хуласенчи ĕҫҫыннисем фронта пулăшассине малалла вăйлатас, çавăн пекех тата ĕҫҫыннисен пурнăҫне йăла условийĕсене лайăхлатас шутпа, 1943 çулăн иккĕмĕш çурçулĕнче социализмлă ăмăртăва тухса, хăйсем çине çакăн пек обязательствăсем илеççĕ:

ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ЕНĔПЕ

1. 1943 çулхи производство программине кашни промышленность предприятийĕн тата промартелĕн пур номенклатурăсем тăрăх та пысăк пахалăхлă продукци парса срокчен пурнăҫа кĕртмелле. Хĕрлĕ Çарăн главнокомандованийĕн фондне хывма планран ирттерсе продукци туса кăларассине пурнăҫа кĕртмелле.

2. Хулари мĕнпур заводсемпе фабрикăсенчи, артельсенчи, строительствăсенчи тата учрежденисенчи рабочисемпе служащисене коллективлă социализмлă ăмăртăва тата уйрăм çынсем хушшинче пыракан ăмăртăва явăçтармалла, вĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăҫа кĕртмелле тăвас пулать. Чи лайăх стахановецсемпе ударниксен опытне анлăн сарса пымалла, предприятисенче производствăллă пропагандăна тăтăшах сарса пымалла, промышленноçри квалификациллĕ кадрсем ҫитменнине питес шутпа ҫĕнĕ рабочисене вĕрентсе хатĕрлемелле.

3. 1943 çулхи октябрь уйăхĕччен промышленность предприятийĕсемпе артельсене тата учрежденисене хĕле пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе ҫитермелле.

4. Промышленность предприятийĕсемпе артельсем тата учрежденисемпе ĕҫҫыннисем валли 1943—44-мĕш çулхи сезонра вутă хатĕрлеме тата турттарма палăртнă плана пурнăҫламалла: Йошкар-Ола тăрăх 201 пин кубометр чухлĕ, Шупашкар хули тăрăх 147 пин кубометр чухлĕ вутă хатĕрлесе турттармалла.

5. Промышленность предприятийĕсемпе ĕҫҫыннисен электроэнерги тата шыв тĕлĕшпе ыйтăвĕсем ӳснине тивĕçтерес шутпа Шупашкар хулинче ҫĕнĕ электростанци туса ҫитермелле тата çуллахи вăхăтра халь ĕçлекен электростанцийĕн дизельсене тĕпрен юсамалла.

Хулари водопроводăн вăйне талăкра 4 пинрен 8 пин кубометра ҫити шыв памалла туса ӳстермелле, пĕр километр тăршшĕ ҫĕнĕрен шыв пăрăхĕсем хывмалла тата шыв паракан 7 будка ҫĕнĕрен туса лартмалла.

Йошкар-Ола хулинче 1943 çулхи виççĕмĕш кварталта, ВЭС-а ĕҫе янă хыççăн, хулари электростанцине тĕпренех юсаса ĕҫе ямалла. Водопровод станцине сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр ҫĕнĕрен йĕркелесе тумалла, ăна талăкра 1500 кубометр вырăнне 3000 кубометр шыв паракан тумалла. 5 ҫĕрте ҫĕнĕрен ҫăл чавса ĕҫе ямалла.

Хуласенчи предприятисемпе учрежденисем колхозсене шефа илессине организацилемелле, колхозсене хуҫалăхпа культура тĕлĕшĕнчен практикăллă пулăшу парса тăмалла.

ПУРĂНМАЛЛИ СУРТЙĔРСЕМ ТĂВАССИПЕ КОММУНАЛЬНĂЙ СТРОИТЕЛЬСТВО ТАТА ХУЛАСЕНЕ ЛАЙĂХЛАТАССИ ЕНĔПЕ

1. Пурăнмалли çуртйĕрсем тума хула совечĕсене уйăрса панă укçа-тенкĕпе—Йошкар-Ола хули тăрăх 565 пин тенкĕ чухлĕ, Шупашкар хули тăрăх 368 пин тенкĕ чухлĕ пĕтĕмĕшпех усă курмалла, çак ĕçе хуласенчи ĕҫҫыннисене активлăн хутшăнтармалла.

2. 1943 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕччен мĕнпур коммунальнăй предприятисене тата пурăнмалли çуртсене, çак ĕçсене тума панă укçа-тенкĕ мĕн чухлĕ пурне кура, пысăк пахалăхпа капитальнăй тата текущи ремонт туса ҫитермелле.

3. Хуласенчи садсене кăтартуллă йĕркене кĕртмелле. Çуллахи вăхăтра вĕсенче культурăллă-массăллă ĕçе йĕркелемелле (эстрада, кино, лекцисемпе ытти мероприятисем).

4. Августăн 15-мĕшĕччен кино-театрсемпе хуласенчи театрсене капитальнăй ремонт туса ҫитермелле. Июлĕн 10-мĕшĕччен Йошкар-Ола хулинче 1200 çын вырнаçмалăх «Симĕс театра» туса ҫитермелле.

5. Пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй çуртсене, урамсемпе картишсене таса та йĕркеллĕ тытса тăмалла. Лартнă йывăçсене пĕтĕмĕшпех сыхласа хăвармалла тата газонсемпе садсене, стадионсене йĕркеллĕ тытса тăмалла, кĕркунне ҫĕнĕрен йывăçсем лартмалла.

СУТУ-ИЛУ ТАТА ПĔРЛЕ АПАТЛАНАССИ ЕНĔПЕ

1. Таварçаврăнăшĕн çулталăкри планне 1943 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕччен пурнăҫа кĕртмелле. Таварçаврăнăшне вырăнта туса кăларакан таварсене май килнĕ таран ытларах хутшăнтармалла.

2. Пĕрле апатланас ĕçĕн пахалăхне децентрализованнăй хатĕрлевсен шучĕпе тата вăрмансенче ӳсекен çырла-çимĕçсемпе кăмпасем хатĕрленипе лайăхлатмалла.

Çĕрулми, пахча-çимĕçсем, çырла-çимĕçсем тата кăмпа татса хатĕрлемелли плана пур организацисемпе ОРС-сем тăрăх та пурнăҫа кĕртмелле. Пулă тытмалли плана тултармалла.

3. Подсобнăй хуçалăхсенче пахча-çимĕçсене лайăх пăхса ҫитĕнтерсе, çĕрулмине гектартан 120 центнер, купăста 180 центнер, кишĕр 140 центнер, хĕрлĕ кăшман 120 центнер, хăяр 130 центнер пухса илмелле, çав пахча-çимĕçсене вăхăтра пухса кĕртсе хĕл валли пĕтĕмĕшпех сыхласа хăвармалла, çакна тума 1943 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр овощехранилищесемпе каткапичкесене хатĕрлесе хумалла.

ХАЛĂХ СЫВЛĂХНЕ СЫХЛАС ТАТА ХАЛĂХА ÇУТТА КĂЛАРАС ĔÇСЕМ ЕНĔПЕ

1. Хуласенче халăх сывлăхне сыхлас ĕçе лайăхлатас шутпа çакăн пек мероприятисене пурнăҫа кĕртмелле:

а) 1943 çулхи сентябрь уйăхĕччен больницăсене пурне те хĕле хатĕрлесе ҫитермелле, вĕсенче кирлĕ пек ремонта туса ирттермелле тата ҫителĕклĕ таран вутă хатĕрлесе памалла.

б) Ерекен чирпе чирленĕ çынсене пурне те вăхăтра больницăсене вырнаçтармалла, ерекен чир тухнă вырăнсене малтанхи кунах тасатмалла, больницăсенче ерекен чирсене малалла сарăлма памалла мар тата ерекен чирпе чирленĕ çынсене больницăсенчен вăхăт ҫитмесĕр тухма памалла мар, профилактика енĕпе тăвакан прививкăсене 1943 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех туса ҫитермелле.

в) Промышленность предприятийĕсенчи амбулаторисемпе сывалмалли пунктсене медицина работникĕсем ҫителĕклĕ таран парса ҫирĕплетмелле. Оборона предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисене больницăсенче пĕрремĕш черетпе йышăнмалла тумалла. Рабочисем хушшинче медицина темисем тăрăх лекцисем тата консультацисем ирттерессине организацилемелле. Производствăра инкексенчен сыхланассине вăйлатмалла, промышленность предприятийĕсенчи рабочисем хушшинче ĕçре аманассине тата чирлессине май килнĕ таранах чакармалла.

2. Сывалмалли профилактикăллă учрежденисенче, ача-пăча учрежденийĕсенче, промышленноçпа суту-илу тата апат-çимĕç предприятийĕсенче санитари тĕлĕшпе кăтартуллă йĕрке туса хумалла.

3. Сывалмалли учрежденисенче хуласенчи сануполномоченнăйсене пухса уйăхра пĕрре канашлу-семинар туса ирттермелле, пĕтĕм хулари сануполномоченнăйсене пухса—кварталта пĕрре канашлусем ирттермелле, çак ĕçе 500 сануполномоченнăйран кая мар уйăрса ҫирĕплетмелле.

Хуласенче санитари пропагандине тăтăшах туса пымалла, çак ĕçе врачсемпе медицинăн вăтам персоналне активлăн явăçтармалла.

4. Пурне те хутла вĕрентесси çинчен калакан закона пурнăҫа кĕртмелле, хуласенчи шкулсене ҫĕнĕ вĕренӳ çулне пурне те вăхăтра хатĕрлесе ҫитермелле.

5. 1943 çулхи çуллахи вăхăтра шкул çулĕнчи ачасене лагерьсемпе площадкăсене явăçтармалла: Шупашкар хулинче—1050 çынна, Йошкар-Олара—1000 çынна явăçтармалла. Ачасен сачĕсенчи вырăнсен хисепне Шупашкар хулинче 1300 çынна ҫити, Йошкар-Олара 900 çынна ҫити ӳстермелле.

6. Ачасем никам пăхмасăр пăсăлса каясран сыхламалли мероприятисене туса ирттермелле (ашшĕ-амăшĕсĕр ачасене пăхма илесси, ывăллăха илесси, тăлăх ачасене ача çурчĕсене вăхăтра вырнаçтарасси, подростоксене ĕçе вырнаçтарасси).

ÇАРПА ФИЗКУЛЬТУРА ĔÇĔСЕМ ЕНĔПЕ

1. Хĕрлĕ Çар валли кадрсем хатĕрлемелли плана, хуласем валли туса панăскерне, 1943 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăҫа кĕртмелле, вĕренӳ подразделенийĕсенче вĕренӳ пахалăхне ӳстермелле.

2. 1943 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ПВХО пĕрремĕш сыпăкри нормисем тăрăх халăха пĕтĕмĕшпех вĕрентсе ҫитермелле.

3. Июль уйăхĕнче хуласенчи объектсене сывлăшран килсе тапăнниннчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланас енĕпе пĕтĕмпех хатĕрлесе ҫитермелле.

4. Хуласенчи массăллă физкультура ĕçне лайăх организацилемелле, предприятисемпе учрежденисенчи, шкулсенчи физкультура коллективĕсене ĕҫҫыннисемпе çамрăксен анлă массисене явăçтармалла.

Çуллахи спортăн массăллă вăййисене: футбол, волейбол, городки, баскетбол вăййисене, шывра ишессине анлăн сармалла, çавăн пекех тата йĕлтĕрлĕ спорта ĕҫҫыннисене массăллăн явăçтарасси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

ФРОНТОВИКСЕН СЕМЬИСЕМШĔН ТĂРĂШАССИ

Фронтовиксен çемьисемшĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшмалла, вĕсен нушисемпе ыйтăвĕсене тимлĕн тивĕçтерсе пымалла. Вĕсен хваттерĕсене юсаса памалла, хĕлле хутма вутă хатĕрлесе памалла.

Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕпе хавхаланса, Йошкар-Олапа Шупашкар хулисенчи ĕҫҫыннисем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене ирттерсе тултарасшăн пĕтĕм вăя хурса кĕрешĕç, ылханлă тăшмана хăвăртрах çапса аркатас ĕçре хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшас тесе икĕ хут вăя ӳстерсе ĕçлĕç.

Договора Шупашкарпа Йошкар-Ола хулисен представителĕсем алă пуснă.

Совет авиацийĕ пĕр çĕре пухăнса тăнă тăшман войскисене пыра-пыра çапни

Июлĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен самолетсен пысăк ушкăнĕ Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче тăшман войскисемпе техникине пыра-пыра çапнă. Нимĕç войскисем пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсем çине совет летчикĕсем бомбăсем нумай пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула танксем, автомашинăсем, артиллери батарейисем нумай пĕтерсе тăкнă, е сиенленĕ, боеприпассен темиçе складне сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн çыннисене чылай пысăк çухатусем кӳнĕ. Боевой заданирен пирĕн икĕ самолет таврăнман.

Пирĕн авиаци тăшман войскисене пыра-пыра çапни

Июлĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци пысăк вăйĕсем Орелпа Курск тата Белгород енĕсенче тăшман войскисене тата техникине пыра-пыра çапнă. Пирĕн самолетсем нимĕç пехотин колоннисем çине, танксемпе автомашинăсем пĕр çĕре пухăнса тăнă вырăнсем çине тата тăшман войскисен чи çывăхри тылĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула тăшман войскисене чылай пысăк çухатусем кӳнĕ. Боевой заданирен пирĕн пĕр самолет таврăнман.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем минăсем лартса тухас тĕлĕшпе пысăк операцисем туса ирттернĕ.

«Москито» йышши самолетсем Францири чугунçул объекчĕсене атакăланă. «Тайфун» йышши самолетсем Голланди çыранĕсем çывăхĕнче тăшманăн икĕ миннăй тральщикне тата хĕçпăшалланнă пĕр траулерне сиенленĕ. Çав кунах Булонь çывăхĕнче тăшманăн судновĕсене тапăннă.

ФРАНЦУЗ ПАТРИОЧĔСЕМ ГИТЛЕРЛА ОККУПАНТСЕМПЕ КĔРЕШНИ

ЖЕНЕВА, июлĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Францирен пĕлтернĕ тăрăх, Тури Савойя тăвĕсенче Германие ĕçлеме ямашкăн мобилизацилессинчен пытанса çӳрекен француз çамрăкĕсем, партизансен отрячĕсене хутшăнса, гитлерла оккупантсемпе тата вĕсене пулăшакан Вишири сутăнчăксемпе çапăçаççĕ. Нумаях пулмасть 20 çамрăк француз çĕрле Аннеси хулинче пурăнакан пĕр палăллă Виши чиновникĕ патне пӳрте кĕрсе кайнă. Вĕсем çав чиновнике сыхса пăрахнă та, автомашина çине лартса, ту çине илсе кайнă.

Июнĕн 29-мĕшĕнче Сен Пристора чугунçул çинче пысăк диверси тунă. Запасри çул çинче тăракан тавар эшелонĕнче пушар пуçланса кайнă. Горючи тиесе лартнă 13 вагон çунса кайнă.

Юсельпе Тюлль хушшинче француз патриочĕсем пĕр эшелона тапăннă. Ку эшелонпа Германие ирĕксĕр ĕç ĕçлеттерме француз рабочийĕсен ушкăнне турттарса пынă. Патриотсем поезда чарса лартнă та француз рабочийĕсене пурне те ирĕке кăларнă. Марсельте нимĕç полицийĕ Çурçĕр Африкăна вăрттăн кайма хатĕрленсе çитнĕ француз çамрăкĕсен ушкăнне арестленĕ.

НИМĔÇСЕН НОРВЕГИРИ ОККУПАЦИЛЛĔ ВОЙСКИСЕНЧЕН ТАРАКАНСЕН ШУЧĔ ӲССЕХ ПЫРАТЬ

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен Норвегири оккупациллĕ войскисенчен таракансен шучĕ ӳссе пыни гитлеровецсемшĕн хăрушă ĕç пулса тăрать. Швеци хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен Норвегири оккупациллĕ войскисен главнокомандующийĕ Фалькенхорст генерал ятарласа уйрăм приказ кăларнă. Ăна войскăсем тăрăх саланă. Вăл приказра нимĕçсен Норвегири чаçĕсенче «намăс ĕç—салтаксем тарни ӳснине» кăтартса панă.

Чугунçул валли—вутă

СЕНТЕРВАРРИ. Июлĕн 7-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Район июлĕн 6-мĕшĕ тĕлне чугунçул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли плана 148 процент, турттармалли плана 129 процент пурнăçларĕ.

«Большевик», «1-ое мая», «Восток», «Верный путь», «Красная Армия» колхозсем вутă хатĕрлемелли, турттармалли плана срокчен пурнăçларĕç. Уйрăм бригадăсем вăрманта калама çук аван ĕçлерĕç. «Правда» колхозри Матвеевский юлташ ертсе пыракан бригада задание 200 процент таран тултарчĕ. «Заря» колхозри Бурцев, «Коминтерн» колхозри Исаева юлташсен бригадисем ĕç планне кашни кунах 120—160 процент тултарса ĕçлерĕç.

Анчах районра вутă хатĕрлес ĕç çине сӳрĕккĕн пăхакан колхозсем те пур-ха. «Пищевик» (правлени председателĕ Волков) колхоз вутă хатĕрлемелли плана 1 процент çеç пурнăçланă. «Красноармеец», «Трактор» тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем те чугунçул валли вутă хатĕрлемелли плана палăкхи куна 8 процент кăна пурнăçланă.

А. МОРЯКОВ.

Çарансене, кĕтӳ çӳрекен вырăнсене лайăхлатасси

Йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тесен, ун валли апат-çимĕç туса илессине вăйлатмалла. Çак ĕç отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче татах та ăнăçлăнрах пулса пыма тивĕçлĕ.

Утă туса илес ĕçре пуринчен ытларах улăхсем пысăк вырăн йышăнса тăни паллă. Пирĕн республикăра улăх çаранĕсем 62.493 гектара çити шутланаççĕ. Вĕсенчен Атăл, Сăрă тата Çавал шывĕсем тăрăх çурхи шывпа шăварăнса юлакан çарансем 23.474 гектар.

Çакăн чухлĕ çĕр лаптăкĕ выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлес ĕçре питех те хаклă, анчах çав улăх-çарансемпе тĕрĕс усă курни, вĕсене лайăх пăхса тăни кирлĕ. Вара сахал мар утă илме пулать. Кунсăр пуçне, колхозсен кĕтӳ çӳретмелли 83.365 гектар çĕр пур. Калас пулать, çав кĕтӳ çӳретмелли вырăнсемпе усă курма пĕлмен пирки выльăх-чĕрлĕхе сахал апат-çимĕç, сахал симĕс курăк лекет. Чылай колхозсем çарансемпе, кĕтӳ çӳретмелли вырăнсемпе агротехника хушнă пек усă курма тăрăшмаççĕ. Атăл, Сăрă тата Çавал шывĕсем тăрăхĕнчи çарансем хытхурасемпе тата ытти кирлĕ-кирлĕ мар курăксемпе тулса ларнă. Çавсене çарансенчен пĕтĕмпех тасатас пулать.

Лапам вырăнсенчи çарансене, кашни çуркунне шыв илекен вырăнсене типĕтме тăрăшмалла, вĕсенчен шыва кăларса яма ятарласа канавсем тумалла.

Тӳрем вырăнлă çарансене çулсерен тĕрлĕрен им-çамсемпе кĕл сапса çемçетмелле.

Пирĕн çарансем нумай вырăнсенче сайра курăклă пулаççĕ. Наукăсен Академин экспедицийĕ кăтартнă тăрăх, Çĕрпӳ районĕнчи «Ильич» колхозăн улăхĕ çавал варринче пулин те, унта усăллă курăк 70 процент кăна шутланать.

Нумай вырăнсенче 90 процента çити кирлĕ-кирлĕ мар курăксем пусса илнĕ. Çапла вара эпир нумай çарансенчен тутă тытакан утă илеймесппĕр.

Çавăнпа та улăхсене пирĕн хыт-хурасенчен тасатса, лайăх курăксем акса хăварма тăрăшмалла. Ăна тума лайăх курăксен вăррине пухмалла, ку ĕçе пуринчен ытла пионерсемпе шкул ачисене явăçтармалла.

Агроном М. САРРЭ.

Çулталăк планне 92 процент пурнăçланă

ЭЛĔК. „Самолет" ятлă промысла артелĕ июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăк программине 92 процент пурнăçларĕ. Кантра явакан цех çулталăк планне 250 процент тултарнă. Е. Мурзаева, А. Филиппова, И. Васильева работницăсем хăйсен заданине яланах 200 процентран кая мар тултарса ĕçлеççĕ. Нумаях пулмасть артельре тăмран чашăк-тирĕк тăвас ĕçе организациленĕ. Ку ĕçе И. Александрова юлташ ертсе пырать.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăвашпромстрахкассăна яланах ĕçлеме çак специальноçсене пĕлекенсем кирлĕ: довереннăй врач, инспектор, бухгалтерсем тата шут ĕçне пĕччен вĕренсе пыракан учениксем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, 21, „Кожупряжь" промартелĕн çурчĕ. 2—1.

Иртнĕ июнь уйăхĕн 20-мĕш числинче кĕсре-лаша çухалчĕ. Паллисем çапла: 3 çулта, çӳрен, çамки çинче çăлтăр, сăмси шăтăкĕсем хушшинче шурă йĕр пур, çав шурă йĕр сăвара çӳлтен карса илнĕ, лашан ячĕ „Шашка".

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чăваш АССР, Канаш хули, 1-мĕш Канаш станци вокзалĕн начальникне.

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулăн çухалнă пичетне тĕрĕс мар тесе шутламалла.

Шкул директорĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 737 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2. Ф. 6. 53 84 п. л.